**Сценка «Анне яшки – чи тутли»**

**(Г.Н.Волков калавне тĕпе хурса)**

**Выляксансем:**

**Наçтук**
**Вадим**
**Оля**
**Яна**
**Максăм**

Кафе. Пĕр класра вĕреннĕ туссем пуçтаранна. Ольăпа Яна, Наçтук сĕтел хушшинче ларассĕ. Пĕр-пĕринпе калаçассĕ, куласçĕ. Кĕвĕ илтĕнет. Максăм кĕрет

**Максăм**: ООО, хĕрсем, салам. Епле пурăнатăр? Чиперех-и ?
**Яна**: ( Сĕтел хушшинчен тухса Максăм патне пырать, ыталашассĕ) Салам, Максăм! Сана курма çав тери хавас. Чылайранпа ялта-и?
**Максăм:** çук, Яна. Тин çеç яла çитрĕм. Тӳрех сирĕн пата.
**Оля:** Эпир те тин çеç çитрĕмĕр
**Яна:** Эпĕ вара киле те кĕрсе тăмарăм, тӳрех çакăнта.
**Наçтук:** Эпĕ вара анне патĕнче виççĕмĕш кун пурăнатăп.

(Максăмпа Яна та вырнаçса ларассĕ. Çав самантра Вадим çитсе кĕрет, аллинче чечек çыххи. Хул хушшинче папка, шлепкепе

**Вадим:** (Кафене кĕрет.Максăма ыталаса илет, ал парать) Салам, салам пурне те! Добрый вечер Сире курманни чылай.
**Пурте:** Салам!!! (çамрăксем кулкаласа вырнаçса ларассĕ, Вадим хĕрсене пĕрер чечек тыттарать.

**Яна:** çак Вадим вăл яланхи пекех маттур!
**Оля:** Чăнах!
**Максăм:** Ну, каласа парăр, кам ăçта, мĕн ĕçпе, мĕнле пурăнатăр? Питĕ пĕлес килет.
**Яна:** (ура çине тăрать) Эпĕ, тĕслĕхрен, Мускаврa пурăнатăп. Ман унта хваттер, çемье. Эпĕ пĕр пысăк банкра ĕçлетĕп. Укçа лайăх илетĕп. Мĕн кирли йăлтах пур. Кăçал çулла канма кайса килтĕм,

**Оля:** Эпĕ Шупашкарта пурăнатăп. Икĕ ĕçпе ĕçлетĕп. Çемьеллĕ. Мăшăр лайăх. Пĕр сăмахпа, йăлтах йĕркеллĕ.

**Яна:** Максăм, сан тата мĕнле?
**Максăм:** Мĕнле калас, пурнăç пыл та çу. Эпĕ те Мускаврa пурăнатăп. Сана вара, Яна, пĕрре те курман. Малашне тĕл пулăпăр апла.

**Яна:** Ну, Вадим, сан черет. Каласа пар-ха хăвăн çинчен.
**Вадим:** О-О-О, Яна, хам çинчен каласа пама вăхăт та çитес çук . Итлесе те пĕтереймĕр ман çинчен. Эпĕ таçта та çитрĕм, тем те куртăм, Паллакан çынсем çав тери нумай. Кама мĕн кирлĕ – манран ыйтма пултаратăр. Эпĕ туххăмах тупса парăп мĕн кирлине. Пăхар –ха ман çине, мĕнле пурнăçпа пурăнап пек туйăнать?
**Яна:** Чаплă!!
**Вадим:** Вăт çапла! Чаплă!!!!
**Максăм:** Пурин çинчен те пĕлтĕмĕр. Пĕр Наçтук çинчен çеç пĕлеймерĕмĕр. Наçтук, кала-ха мĕн те пулсан
**Наçтук:** Мĕн калас ман сире. Анне паян мана салма яшки пĕçерсе çитерчĕ. Шăп ачалăхри пеккине. Шăрши те çавах. Тĕсĕ те. Анне хăй те улшăнман. Ватăлнă. Паллах, анчах малтанхи пекех илемлĕ те ырă чунлă. Яшкине те тăм чашăка ярса пачĕ. Хĕррипе танах. Мĕнле упраса хăварнă-ши çав чашăка? Ĕмĕрхискер вĕт. Аттеренех юлнă йывăç кашăка туртса кăларчĕ. Килте тунăскере.

Тĕлĕнмелле анне манăн. …Халĕ те ача вырăнне хурса пăхать мана. Ак халĕ те куçа хупатăп та аннен сасси илтĕнет ( Настенька, Наçтусăм, яшка пиçнĕ, çиме кĕр!) Аннен сассине илтнипех тăранса лартăм. Чуна- канлĕх, ӳт-пĕвĕме вăй кĕнĕн туйăнчĕ.

Манăн анне халĕ те сывă! Мĕн тери телей ку маншăн! Урăх нимĕнле пуянлăх та кирлĕ мар!
**Вадим:** Чăнах та, Настя, мĕн тери телейлĕ эсĕ. Айтăр-ха аннесем çинчен пĕр çавра юрă юрлар.

(**«Мĕн курман-ши пирĕн аннесем»** ятлă юрă янăрать)